# Саккунри улшăнусем, йĕркесĕр конкуренци...

**Тата конкурентлăхпа çураçса тăман килĕшÿсем. Ведомствăн çак тата ытти ĕçĕ-хĕлĕ пирки Федерацин монополипе кĕрешекен службин Чăваш Енри управленийĕн ертÿçи Валерий КОТЕЕВ каласа кăтартрĕ.**



**– Раççейри Монополипе кĕрешекен службăна йĕркеленĕренпе пуш уйăхĕнче 20 çул çитрĕ. Çак тапхăр мĕнпе асра юлчĕ?**

– Ведомствăн çуралнă кунĕ – 2004 çулхи пуш уйăхĕн 9-мĕшĕ. Монополипе кĕрешмелли саккунсем пирки каласа кăтартас килет. Шăпах вĕсем служба аталанăвне уçса параççĕ. Йĕркесĕр конкуренцие чарасси тата конкурентлăхпа çураçса тăман килĕшÿсем пирки 1991 çулта калаçма пуçланă. Çав вăхăтранпа ку ăнлавсем анлăланса пынă, административлă тата уголовлă çĕнĕ айăплавсем вăя кĕнĕ.

Монополипе кĕрешме саккунсен пилĕк пуххине йышăннă. Пĕрремĕшне 2006 çулта çирĕплетнĕ. «Конкуренцие хÿтĕлесси çинчен» саккунра хуçалăх субъекчĕсен ĕç-хĕлне виççĕмĕш çынсем йĕркелессипе çыхăннă ăнлавсене уçăмлатнă, монополи тĕлĕшĕнчен пысăк хаксен критерийĕсене палăртнă.

2009 çулта йышăннă иккĕмĕш саккун пуххинче Монополипе кĕрешекен служба полномочийĕсене, тĕрĕслев йĕркисене анлăлатса çирĕплетнĕ, саккуна пăснăшăн уголовлă яваплăх кĕртнĕ.

2012 çулхи виççĕмĕш пухха «картель», асăрхаттару ăнлавĕсене, монополипе кĕрешмелли саккунсене пăснăран кÿнĕ экономика сиенĕсене саплаштарас тĕлĕшпе граждан тавăçĕсем тăратассине, конкуренцие чикĕлемелли паллăсене кĕртнĕ.

Саккунсен 2015 çулхи пуххине пĕрлехи ĕç-хĕл килĕшĕвĕсене пăрăнми йĕркепе тата харпăр хăй ирĕкĕпе йĕркелессине, пуç пулса тăрассинчен асăрхаттарассине чикĕлессине кĕртнĕ. Çавăн пекех Раççей Монополипе кĕрешекен службăн коллеги органĕсене туса хунă.

Пĕлтĕрхи çул саккунсен Пиллĕкмĕш пуххине йышăннипе палăрса юлчĕ. Ăна тата «цифрăллă» теççĕ. Унăн тĕллевĕ – интернетри лапамсенче монополипе кĕрешмелли йĕркесене çирĕплетесси.

**– Экономикăн пур отраслĕнче те конкуренцие хÿтĕлемелли тытăма йĕркелени çинчен каласа кăтартăр-ха.**

– Монополипе кĕрешмелли, патшалăх туянăвĕсем /закупки/, патшалăхăн оборона саккасĕсем, реклама, суту-илÿ, тарифсем, стратеги пĕлтерĕшлĕ отраслĕсенчи ют çĕршывсен инвестицийĕсем пирки саккунсем çирĕплетнĕ. Монополипе кĕрешмелли саккунсене шыв, вăрман, çĕр, хула строительствин кодексĕн, электроэнергетика отраслĕсенче йышăннă. Çĕршывра конкурентлă право ĕç-хĕлне пурнăçлакан 87 территори органĕ ĕçлет, ку сферăри пысăк квалификациллĕ специалистсене 50 ытла аслă шкулта вĕрентсе хатĕрлеççĕ.

**– Халĕ Чăваш Енри управлени пирки калаçар. Сирĕн хăш сферăсене пăхса тăма ирĕк пур?**

– Территори органĕн ĕçĕ-хĕлĕ анлă. Çак шутра – тавар тата финанс рынокĕсенче конкуренци çинчен калакан саккуна пăхăнни, конкуренцие тата хуçалăх субъекчĕсен, влаç органĕсен ĕç-хĕлне чăрмантаракан килĕшÿсене тупса палăртасси. Управлени çавăн пекех реклама, суту-илÿ, конкурентлă тытăм, энергоперекетлĕх çинчен калакан саккунсене пăхăннине сăнаса тăрать. Пирĕн пĕтĕм ĕç пирки, паллах, виçĕ-тăватă сăмахпа каласа кăтартаймăн.

**– Управленин туянусен тытăмне сăнаса тăрассипе çыхăннă ĕç-хĕлĕнче 2023 çулта тĕп вырăна мĕн йышăннă?**

– Раççей Федерацийĕнче туянусен сферинче саккунсене пăхăннине тĕрĕслемелли тĕп мел, паллах, çăхавсене пăхса тухни. Çăхавсене туянусем ирттересси çинчен пĕлтернипе, поставщика /подрядчике, ĕç тăвакана/ палăртмалли условисемпе килĕшменнисем параççĕ. Çавăн пекех саккасçăсен комиссийĕсен, поставщике палăртма туса хунă уполномоченнăй органсен /учрежденисен/, саккасçăсен аукционсен кăтартăвĕсемпе контракт çирĕплетессипе çыхăннă ĕçĕ е ĕçсĕрлĕхĕ тĕлĕшпе çăхав çырма пултараççĕ.

Ыйтăва хуравлама статистика кăтартăвĕсемпе усă курма тивет. Раççейĕн Монополипе кĕрешекен службин Чăваш Енри управленийĕ контракт тытăмĕ çинчен калакан саккунпа килĕшÿллĕн 2023 çулта – 254, 2022 çулта 198 çăхав йышăннă. Управлени 192 çăхав /75,6 процент/ сăлтавсăр пулнине çирĕплетнĕ. 2022 çулта кун пеккисем 137 е пăхса тухнă çăхавсен 69,2 процентĕ пулнă. 2023 çулта 62 çăхавăн /24,4 процент/ сăлтавлăхĕ пуррине палăртнă. 2022 çулта кун пекки 61 çăхав /30,8 процент/ шутланнă. Статистика 2023 çулта сăлтавлă çăхавсен шучĕ, 2022 çулхипе танлаштарсан, чакнине кăтартать. Çапла майпа йĕркене пăснă тĕслĕхсене пĕтермелли пирки панă йышăнусен шучĕ те сахалланнă. Управлени 2023 çулта пăхса тухнă çăхавсем тăрăх патшалăх тата муниципалитет саккасçисене 42 предписани панă. 2022 çулта вĕсен шучĕ 59 пулнă. Предписанисене пурне те вăхăтра пурнăçланă.

Управлени пĕлтĕр штраф хуни çинчен 127 йышăну кăларнă, 2022 çулта – 232. Пĕлтĕр 92 хутчен асăрхаттарнă. Çакă туянусен сферинчи специалистсен ĕçĕ-хĕлĕ çине административлă тиев пĕчĕкленнине кăтартать.

**– Сирĕн шухăшпа, ку юхăм мĕнпе çыхăннă?**

– Сăлтавлă çăхавсен процентĕ чакнине пирĕн республикăра туянусене централизациленипе, поставщика /подрядчика, ĕç тăвакана/ палăртакан уполномоченнăй учрежденисене йĕркеленипе ăнлантарма пулать. Кунсăр пуçне социаллă пĕлтерĕшлĕ сферăсенче, тĕслĕхрен, строительствăра, сывлăх сыхлавĕнче, профессионал шайĕнче саккасçăсен ĕç-хĕлне пурнăçлаççĕ.

Штрафласси пирки калакан постановленисен шучĕ чакнине Раççей Федерацийĕн Административлă йĕркене пăсни çинчен калакан кодекса 2022 çул варринче улшăнусем кĕртнипе сăлтавлама пулать. Çĕнĕлĕхсемпе килĕшÿллĕн административлă пĕрремĕш хут явап тыттаракансене тата йĕркене пăснине патшалăх тĕрĕслевĕ вăхăтĕнче тупса палăртнисене штрафлас вырăнне асăрхаттарма юрать.

Паллах, закупкăсен сферинче ĕçлекен специалистсен професси ăсталăхĕ ÿснине те палăртмасăр хăварма çук.

**– Туянусен сферинче çивĕч мĕнле ыйтусем пур? Вĕсене мĕнле татса памалла?**

– Вăрттăнлăх мар, туянусен сферинчи специалистсем питĕ кăткăс право йĕркелĕвĕн условийĕсенче ĕçлеççĕ. Тепĕр чухне контракт службисен ĕçченĕсем норматив материалĕсен купинче çухалсах каяççĕ. Çакă хăш-пĕр çыншăн туянусем тĕлĕшпе çăхавсем çырмалли сăлтав пулса тăрать. «Профессионал çăхавçăсем» поставщика /подрядчика, ĕç тăвакана/ палăртнă чухне саккасçăсен енчен вĕсен саккунлă интересĕсене пăсни пулмасан та пĕлтерĕшлĕ туянусен тĕлĕшпе çăхавсем çыраççĕ. Çапла майпа контракт çирĕплетессине тăсса пыраççĕ е закупка ĕç-хĕлне вусех чарса хураççĕ.

Иртнĕ çул вĕçĕнче Раççейĕн Монополипе кĕрешекен службин тата унăн регионсенчи органĕсем вăл е ку ĕç-хĕл сферинче лицензи çук тата «ятарлă квалификацисĕр» /контрактра палăртнă ĕçпе çыхăннă опытсăр, ĕçсене пурнăçлама кирлĕ оборудованисĕр, пурлăх ресурсĕсĕр/ çынсенчен çăхав йышăнмалли çул-йĕре улăштарчĕç. Халĕ çак условисене тивĕçтерменнисен çăхавĕсене пăхса тухмаççĕ.

**– Эсир çавăн пекех влаç органĕсемпе предприниматель пĕрлĕхĕсен хутшăнăвĕсене сăнаса тăратăр. Ыттисене сиен кÿрсе пĕр компанишĕн паха условисем туса панă тĕслĕхсем пулман-и?**

– Шел те, шута илнĕ. Пирĕн управлени Шупашкар хулин Капиталлă строительство тата реконструкцийĕн управленийĕ тулли мар яваплăхлă пĕрлĕхпе конкуренципе шайлашса тăман килĕшÿ çирĕплетнине асăрханă. Контракт 2021 çулхи нарăс уйăхĕнчен пуçласа 2022 çулхи нарăсчен вăйра тăнă.

2020 çулхи çурла уйăхĕнче «Союзстройинвест» пĕрлĕх /«подрядчик» тейĕпĕр ăна/ тата Шупашкар хулин Капиталлă строительство тата реконструкцийĕн управленийĕ капиталлă объект строительствине пурнăçлама муниципалитет контрактне çирĕплетнĕ. Подрядчик учреждение сывлăшри электричество линийĕсене контрактра палăртнă вăхăтра куçарма май çукки пирки темиçе те пĕлтернĕ. Анчах саккасçă ячĕшĕн кăна хурав панă, тăкаксене саплаштармалли килĕшĕве çирĕплетме май пурри пирки нимĕн те пĕлтермен. Юлашкинчен учреждени контракта пĕр енлĕн пăрахăçлама йышăннă. 2021 çулхи çу уйăхĕнче Шупашкар хулин Капиталлă строительство тата реконструкцийĕн управленийĕ çак ĕçсене пурнăçлама тепĕр пĕрлĕхпе контракт çирĕплетнĕ. Контракта пурнăçланă май виçĕ сийлĕ стена панелĕсене керамзитобетон блокĕсемпе улăштарма проект документчĕсене улшăнусем кĕртме, строительство ĕçĕсен хакне ÿстерме йышăннă.

Çапла майпа конкурентлăхпа çураçса тăман килĕшÿ «Стройинвест» пĕрлĕхе рынокран сирсе тепĕр пĕрлĕхе «Сад» микрорайонти шкул строительствине пурнăçлама меллĕ условисем туса панă.

Рынока хутшăнакан пайăр пĕрлĕхпе килĕшсе татăлса контракта пурнăçлама меллĕ условисем туса панă. Вăл та, саккасçă пекех, конкурентлăх ĕç-хĕлне йĕркелемесĕр объектри ĕçсене пурнăçлама хатĕрленнĕ. Пĕрлĕх малтанхи подрядчикпе контракта мĕншĕн татнине пĕлмесĕр тăма пултарайман. Апла пулин те электролинИе куçармалли условисем çинчен тата ĕçсене палăртнă вăхăтра /1 уйăхра/ пурнăçлама май килменни пирки пĕлсе тăрсах туянусене хутшăнма тата контракт çирĕплетме килĕшнĕ. Кунсăр пуçне пĕрлĕх конкурс тата проект документчĕсенче кăтартнă условисене хăй çине хăй ирĕкĕпе илнĕ хыççăн контракт çирĕплетсен тÿрех саккасçă патне проектпа смета документчĕсенчи стена панелĕсене улăштармалли пая улшăнусем кĕртме ыйтупа тухнă. Вĕсемпе усă курма май çуккине малтанхи подрядчик «Союзстройинвест» пĕрлĕх те палăртнă, анчах унпа çирĕплетнĕ контракта пăрахăçланă. Пĕрлĕхе административлă майпа явап тыттарма йышăннă.

**– Предпринимательсен ĕçĕ яланах тĕрлĕ хăрушлăхпа çыхăннă. Конкурент тÿрĕ кăмăлпа ĕçлеменни суту-илĕве кăткăслатать е ĕç-хĕле чарса хурасси патне илсе çитерет. Кун пек тĕслĕхсем те пурах-тăр.**

– 2023 çулхи çĕртме уйăхĕнче управлени Хусанти пĕрлĕхе йĕркесĕр конкуренципе çыхăннă ĕç-хĕле чарма асăрхаттарнă. Организаци тепĕр пĕрлĕхĕн ят-сумне варалакан çырусем салатнă. Тĕрĕсрех, вăл медицина изделийĕсене туса кăларса сутма пултараймани пирки суя сăмах кăларнă. Организацисем хирурги çипписене сутакан рынокра конкурентсем шутланаççĕ.

Общество монополипе кĕрешекен орган асăрхаттарнине пурнăçланă. Анчах маларах сарнă информаци тĕрĕс марри пирки пĕлтермен. Çавăнпа Раççейĕн Монополипе кĕрешекен службин Чăваш Енри управленийĕ ĕç пуçарнă. Конкуренцие хÿтĕлекен саккунсем хуçалăх субъекчĕн тупăшне чакаракан, унăн ят-сумне варалакан ĕçсене пурнăçлама чарать. Çавăнпа управлени комиссийĕ пĕрлĕх йĕркене пăснине çирĕплетнĕ.




**Валентина БАГАДЕРОВА**